# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

50 (8716) № * Юнкун, 2019 çулхи утă (июль) уйăхĕн 3-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Паян – ГАИ кунĕ

## Çул çинчи йĕркелĕхшĕн тăрăшакансем



**Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕ Муркаш район территорийĕнчи пурĕ 734 км ытла тăршшĕ çулсем çинче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессипе тимлет.**

**2011 çултанпа уйрăма полици майорĕ Сергей Иванов ертсе пырать. Çулсем çинче хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес ĕçе унпа пĕрле тепĕр пилĕк сотрудник тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать: административлă законодательствăна пурнăçлассипе тимлекен полици лейтенанчĕ Алексей Илларионов, çул-йĕр патруль службин аслă инспекторĕ – полицин аслă лейтенанчĕ Юрий Васильев, çул-йĕр патруль службин инспекторĕсем – Александр Щербаковпа Валерий Димитриев аслă лейтенантсем тата Алексей Филимонов лейтенант. Сăмах май, уйрăмра ыттисенчен каярах ĕçлеме тытăннă Алексей Филимоновăн та ĕç стажĕ икĕ çултан иртнĕ. Апла пулсан пĕр тĕллевпе ĕçлеме пултаракан пĕчĕк коллектив йĕркеленнĕ теме те май пур.**

**Иртнĕ çур çулта çул-йĕр хăрушсăрлăх правилисене пăснăшăн районти инспекторсем пурĕ 1395 çынна административлă майпа явап тыттарнă. Тĕрлĕ рейдра урă мар 44 водителе тытса чарнă, вĕсенчен виççĕшĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕçсем пуçарнă. Транспорт хатĕрĕпе çӳреме право çук 46 çынна руль умĕнче тытса чарни вара кун пек водительсен ответлăх шайĕ çуккине кăтартса парать. Уйрăм ертӳçи палăртнă тăрăх, кăçалхи çур çулта пирĕн район территорийĕнчи çулсем çинче 17 авари пулнине регистрациленĕ. Вĕсенче 1 çыннăн пурнăçĕ татăлнă, 19 çын суранланнă.**

**Инспекторсем кулленех çул çинче: çул-йĕр çинче пулма пултаракан инкексене асăрхаттарни районта пурăнакансен лăпкăлăхне упрама, çулсем çинчи йĕркелĕхе тытса тăма пулăшать.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Çĕнĕлĕх

## Лавккара чăн сĕте уйăрса илме пулать

**Июлĕн 1-мĕшĕнчен Раççейре сĕт продукчĕсене сутасси çĕнĕ йĕркене пăхăнса тăмалла. Малашне сĕт çăвĕсене ылмаштаракан хутăшсăр сĕт продукчĕ сентре çинче палăрса тăмалла.**

Кун пирки Новости РИА пĕлтерет.

Каласа хăвармалла, çак йĕрке çинчен калакан РФ Правительство постановленийĕ кăçалхи январь вĕçĕнче кун çути курчĕ.

Çĕнĕ йĕркепе килĕшӳллĕн, суту-илӳ залĕсенче тата ытти суту-илӳ вырăнĕнче сĕт продукчĕсене ыттисенчен уйăрсарах палăртма «Продукты без заменителя молочного жира» информаци хыпарĕ пулмалла.

Маларах, 2019 çулхи пĕрремĕш кварталта, тĕрĕслевсем иртнĕ хыççăн, Роспотребнадзор çĕршывра 19 млн тонна ытларах, пурĕ 1,5 пин парти, сĕт тата сĕт продукцине çаврăнăшран кăларнă.

Информаци агентстви хыпарланă тăрăх, çĕршыври пысăк суту-илӳ сечĕсем çак çĕнĕлĕхе пурнăçа кĕртме хатĕрленнĕ. Тавар ценникĕ çинче е «СЗМЖ» (содержит заменитель молочного жира) тата «БЗМЖ» (без заменителя) тесе паллă туни пур. Çавăн пекех хăш-пĕр суту-илӳ залĕсенче ятарлă плакатсем те çакма шутлаççĕ.

Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райпо лавккисенче ку çĕнĕлĕхе мĕнле пурнăçлама тытăннă-ха?

Муркаш райпо правленийĕн председателĕ Роза Скворцова пĕлтернĕ тăрăх, райпо лавккисем, суту-илӳ центрĕсем валли ятарласа «Без заменителей молочного жира» тесе çырнă пластик хăюсем хатĕрленĕ. Вĕсене сентресем çине вырнаçтарнă. Кунпа пĕрлех продукт ценникĕсем çинче «СЗМЖ» (содержит заменитель молочного жира) тата «БЗМЖ» (без заменителя) аббревиатурăсем пулĕç. Çакă автоматизаци системипе усă курнăран тавар ценникĕ çине тӳрех пичетленсе тухмалла. Тепĕр паллă: суту-илӳ залĕсенче çак аббревиатурăсем мĕне пĕлтернине ăнлантарса çырни те пулĕ. Муркаш райповĕн сутуçисемпе ку тĕлĕшпе пуху ирттернĕ, çĕнĕлĕх пирки пĕтĕмпех ăнлантарса панă.

Мăн Сĕнтĕр райпо правленийĕн председателĕ Надежда Васильева та çĕнĕлĕхе чăрмавсăрах пурнăçа кĕртнине пĕлтерчĕ. Вăл каланă тăрăх, Мăн Сĕнтĕр райповĕн лавккисемпе суту-илӳ центрĕсенче сĕт продукчĕсем пирки калакан кĕске хыпара сентресем çинче вуласа пĕлме пулать. Çапла вара пĕр сентре çине чăн сĕт продукчĕсене вырнаçтараççĕ, сĕт çăвне ылмаштаракан хутăшлисене – хăйсен сентри çине. Мороженăй, ĕне çăвĕ тата сĕтпе усă курса хатĕрленĕ ытти продукт патĕнче те вĕсене уйăрса илмелли паллăсем пулĕç. Сутуçăсем те çĕнĕлĕх пирки тавар туянакана çăмăллăнах ăнлантараççĕ – вĕсемпе ятарлă пуху кунта та иртнĕ.

Апла пулсан экологи тĕлĕшĕнчен пахарах, сывлăхшăн усăллăрах сĕт продукчĕсене лавккара пĕрре пăхсах уйăрса илме тытăнăпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Пенси ыйтăвĕпе

## Списока анлăлатнă

**Çĕртме уйăхĕн 25-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн премьер-министрĕ Дмитрий Медведев яллă вырăнсенче пурăнакан тата пенси çумне 25 процент хушма укçа илме тивĕçекен пенсионерсен спискине анлăлатма пăхнă постановление алă пуснă.**

Аса илтеретпĕр, 2019 çулта маларах асăннă 25 процентлă хушма тӳлев пирки саккун ĕçлеме пуçларĕ. Çак çĕнĕлĕх 30 çултан кая мар уйрăм специальноçсемпе ял хуçалăхĕнче ĕçленĕ, паян ялта пурăнакан пенсионерсене пырса тиврĕ. Хушма тӳлеве тивĕçнĕ профессисен спискине правительство постановленийĕпе çирĕплетнĕ. Çĕнĕ постановлени ăна хушусемпе çĕнĕлĕхсем кĕртсе анлăлатать.

Раççейăн Ĕç министерствинчен ăнлантарнă тăрăх, анлăлату ял хуçалăхĕнче тĕрлĕ çĕрте ĕçленисемшĕн, индивидуаллă предпринимательсемшĕн, ял хуçалăх техникипе производство оборудованине пăхса тăнисемпе юсавçăсемшĕн, склад заведующийĕсемпе хуралçăсемшĕн пĕлтерĕшлĕ.

Ĕç министрĕ Максим Топилин каланă тăрăх, çĕнĕлĕхсене çур çул хушшинчи практикăна тĕпе хурса тата çынсен ыйтăвĕсене шута илсе ялта пурăнакан пенсионерсен прависене хӳтĕлессипе тунă.

Раççей Пенси фончĕн хаклавĕпе асăннă хушма тӳлеве илекенсен йышĕ 30 пин çынна яхăн хушăнмалла. Паян ăна 923 пин пенсионер илсе тăрать.

**ЧР Ял хуçалăх министерстви.**

Республикăра

## Шупашкарта уявлаççĕ

Июлĕн 8-мĕшĕ – Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ. Çак куна халалласа июлĕн 7-мĕшĕнче Шупашкарта Амăш палăкĕ умĕнче уяв концерчĕ иртет. Унта Раççей эстрада çăлтăрĕсем хутшăнаççĕ.

Çак концерт вăхăтĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ М. Игнатьев республикăри ырă тĕслĕх пулса тăракан çемьесене «Юратупа шанчăклăхшăн» медаль тата орден парса чыслать. Медале 25 е ытларах çул, ордена 50 е ытларах çул пĕрле пурăнакансем тивĕçеççĕ.

Концерт пурте пĕрле Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕн гимне юрланипе вĕçленет.

**Хамăр инф.**

Симĕс ĕç çи – 2019

## Апат хисепĕ ӳсет

Выльăх апачĕ хатĕрлеме пĕрлешӳллĕ кооперативсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем утă уйăхĕн 2-мĕшĕ тĕлне нумай çул ӳсекен курăксене пурĕ 4257 гектар (63 процент) çулнă. Район администрацийĕн экономикăпа АПК аталанăвĕн пайне тăратнă оперативлă кăтартусемпе пур харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсенче те типĕ утăна пĕтĕмпе 3062 тонна, паха сенажа 6530 тонна, витаминлă курăк çăнăхне 50 тонна хатĕрленĕ. Суворов яч. хис., «Ударник», Ильич яч. хис., Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе «Бездна» обществăра утăна ыттисенчен чылай ытларах янтăланă: 400 – 200 тонна. Сенаж хывассипе «Свобода», Суворов яч. хис., «Путь Ильича», «Ударник» хуçалăхсем тăрăшуллă.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

**Саламлатпăр**

Юратнă та хаклă шăллăма, куккана, пирĕн чи çывăх çыннăмăра – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Геннадий Николаевич НИКОЛАЕВА** сумлă юбилей ячĕпе



пур кăмăлтан ăшшăн, чун-чĕререн саламлатпăр. Эпир сана пурте тулли пурнăçпа татах та нумай çул пурăнма чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул, çутă пурнăç сунатпăр. Кун-çулу чăваш сурпанĕ пек вăрăм та анлă, такăр пултăр, сĕтелÿ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекÿ тăвансемпе, юлташсемпе яланах пуян пултăр. Çемьере килĕшÿпе тулăх пурнăç хуçаланчăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтÿсем пурнăçлансах пычăр, мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе килĕштерсе пурăнмалла пултăр. Ан чирле, инкек-синкек санран яланах пăрăнса ирттĕр. Пире савăнтарса пурăнма Турри вăйхăват патăр сана яланах. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн чунтан савăнатпăр. Юбилей ячĕпе!

**Чи ăшă салампа: Сентимĕр ялĕнче пурăнакан аппăшĕ Зоя, йыснӑшĕ Илья, вĕсен юратнă ачисем мăшăрĕсемпе, мăнукĕсемпе тата йышлă тăванĕ.**

Çатракасси вăтам шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул ОБЖ учителĕнче ĕçлекен пирĕн хаклă ĕçтешĕмĕре – **Геннадий Николаевич НИКОЛАЕВА** сумлă юбилей



ячĕпе чун-чĕререн саламлать. Сывлăху çирĕп, ĕмĕрÿ вăрăм, пурнăçу тулăх пултăр. Чир-чĕр мĕнне пĕлмесĕр тата нумай çул савăнса, ыр курса пурăнмалла пултăр санăн.

**Ырă сунса: ĕçтешсем.**

**Водительсене пĕлме**

# Регистраци номерĕ вуланмасть пулсан

**«Новости» информаци агентстви пĕлтернĕ тăрăх, РФ Аслă сучĕн йышăнăвĕ пур. Унпа килĕшÿллĕн автомашинăн номерне ятарласа вараласа курăнми тунăшăн е ăна пытарнăшăн водителе удостоверенисĕр хăварма пултараççĕ. Çакна административлă майпа право йĕркине пăснин кодексĕн 12-мĕш пайĕпе пăхса хунă.**

Енчен те водитель номере хут татăкĕпе, çулçăпа е юрпа ятарласа хупланă пулсан, суд ăна 5 пин тенкĕ таран штраф тÿлемелле тума е удостоверенисĕр хăварма йышăну тума пултарать. Кун пек чухне ДПС инспекторĕн автомобилист çакăн пек ятарласа хăтланнине суда ĕнентерме тивет. Кун пек ĕнентерни пулмасть пулсан, водителе 500 тенкĕ штраф кĕтет.

Кунсăр пуçне автомобильсем çине харпăр хăй ирĕкĕпе ксенон лампочкисем вырнаçтаракансем тĕлĕшпе те ăнлантарни пур. Унчен кун пек водительсене удостоверенисĕр хăварма пăхнă пулсан, халĕ 500 тенкĕ штраф тÿлеме тивет.

Татах тепĕр ăнлантару – çул-йĕр правилисене пăсса çул айкине тухса кайни пирки. Аслă суд йышăнăвĕнче палăртнă тăрăх, кун пек водительсене никам та çул пама тивĕç мар. Мĕншĕн тесен вĕсем правилăсене пăсаççĕ.

**Пирĕн календарь**

# Минска ирĕке кăларнă

**Июлĕн 3-мĕшĕ** – Раççей çар историйĕн паллă кунĕ. Çав кун 1944 çулта пирĕн çарсем наступлени ирттерсе Минска кĕрсе кайнă. Совет Белоруссине тăшманран хăтарнă. Çак кун Беларусь Республикин никама пăхăнманлăх кунне паллă тăваççĕ.

**Партисен пурнăçĕнчен**

# Партие улшăнусем кĕтеççĕ

**Пĕтĕм Раççейри «Единая Россия» политика партийĕн председателĕ, РФ Правительство председателĕ Дмитрий Медведев, политика конференцийĕ умĕн «Известия» хаçатра хайĕн автор статйинче партие мĕнле улшăнмалли, унăн çĕршыв аталанăвĕнчи тата политика системинчи ролĕ пирки сăмах пуçарнă.**

Вăл палăртнă тăрăх, нацпроектсем партин абсолютлă приоритечĕ пулса тăраççĕ. Д. Медведев право хÿтĕлевĕн центрне йĕркелеме сĕннĕ, «Единая Россия» партие «сервис наборĕ» пулса тăмаллине, çавна май çынсене ăнланмалла тата усăллă инструментсем сĕнмеллине, кирлĕ вăхăтра усăллă пулмаллине каланă.

Д. Медведев парти йĕркеленнĕренпе 18 çул хушшинче çирĕп çулпа утнине, парти депутачĕсем пур шайра та – ял тăрăхĕсен шайĕнчен пуçласа Федераци Пухăвĕн шайĕ таранах суйланнине, вырăнти уйрăмсем пур муниципалитетра, кашни регионта ĕçленине палăртнă. Парти ертÿçи малтанхи сасăлавра кандидатсене суйлассине май пур таран усă ирттернине те асăнса хăварнă. Партин ĕç тăвакан органĕсенчи представителĕсен результачĕсем çинче чарăннă май, Д. Медведев «Единая Россия» парти пуçарăвĕпе çĕнĕ шкулсем, çулсем, çуртсем, поликлиникăсем тунине каланă. Çавăн пекех патшалăх тата общество енчен пулăшу кирлисем валли социаллă пулăшу системине туса хунине, çĕнĕ производствăсемпе ĕç вырăнĕсен йĕркеленине аса илтернĕ. Апла пулин те, «çынсен шанчăклăхĕн дефицитне» туйнине те каланă.

«Çынсене вĕсен шухăшне, сăмахĕсене ытларах та ытларах илтмен пек туйăнать. Пулса иртекен улшăнусем вара çителĕксĕр. Çавăнпа эпир «Единая Россия» партие çĕнетессипе тимлесех ĕçлетпĕр. Парти задачăсен çĕнĕ шайне хатĕр-и? Çитес вăхăтра конкретлă мĕн пурнăçласси çине тимлĕх уйăрмалла?» – палăртнă вăл.

**Абсолютлă приоритет – наци проекчĕсем**

Д. Медведев партишĕн чи пĕлтерĕшлĕ темăсем çинче кĕскен чарăнса тăнă. Çапла вăл партишĕн наци проекчĕсем, çавăн пекех президентăн май уйăхĕнчи указĕнче палăртнă наци тĕллевĕсене пурнăçлас ĕçсем абсолютлă приоритет пулнине каланă. Нацпроектсем çынсен пурнăç условийĕсене çĕршывра вăтамран мар, кашни конкретлă хулапа районта, кашни çемьере лайăхлатма пулăшмаллине палăртнă. Çакна çынсем кĕтнине, çавăнпа та «Единая Россия» партин сăнаканăн позицине йышăнма право çуккине асăрхаттарнă вăл. Çавна май кашни регионтах палăртнă плансене пурнăçа кĕртессипе мониторинг системине туса хумаллине асăннă. Д. Медведев çынсене нацпроектсем регионсенче мĕнле пурнăçланнипе паллаштарса тăмаллине, çынсен ыйтăвĕсене çăхавĕсем çине çийĕнчех тимлĕх уйăрмаллине асăрхаттарнă. «Наци проекчĕсене пурнăçлассинче пуринпе те ĕçлеме вĕренмелле, вăл шутра коммерциллĕ мар организацисемпе те. Вĕсем нумай туме пултараççĕ, «Единая Россия партипе пĕрле вара – тата та ытларах. Уйрăмах конкретлă тĕслĕхсенче адреслă мерăсем йышăнмалла чухне», – тенĕ Д. Медведев.

**Парти ĕçĕ-хĕлĕ «сервиссен наборĕ» пулса тăмалла**

Д. Медведев чарăнса тăнă иккĕмĕш тема – парти структурисемпе çынсем хушшинчи калаçăва ансатрах тата уçăрах йĕркелесси. Парти ĕçĕ-хĕлĕ «сервиссен наборĕ» пулса тăмалла тенине Д. Медведев сервис сăмах латыньрен «служить» тесе куçнине аса илтернĕ. Çапла вара партин общесвăшăн тата суйлавçăсемшĕн ĕçлемеллине, çынсене ăнланмалла тата усăллă, çав вăхăтрах кашни çын усă курма пултаракан инструментсем сĕнмеллине каланă. Вĕсем суйлавçăсен чăн ыйтăвĕсене тивĕçтермеллине асăрхаттарнă. Çынсем партирен информаци илме, пулăшу ыйтма е ăна çĕнĕ проект сĕнме пултарчăр тесе çĕнĕ майсем йĕркелемеллине каланă. Вырăнсенче ĕçлекенсемшĕн вара «кунта тата халĕ» принцип тĕп ен пулмаллине, çынсене «Единая Россия» ыран мар, паянах тата ăçта кирлĕ – çавăнта, меллĕх шырамасăр, усă кÿмеллине палăртнă.

**Ĕçĕн право хÿтĕлев енне вăйлатмалла**

Д. Медведев граждансен прависене хÿтĕлесси ĕçри виççĕмĕш ен пулнине пĕлтернĕ. Хальхи вăхăтра çакна пур регионта та йĕркеленĕ общесвăлла йышăну пÿлĕмĕсен сечĕ урлă туса пынине çырнă вăл. 2019 çулти 5 уйăхра кăна йышăну пÿлĕмĕсене пурĕ 1 млн та 489 пин те 152 çын хăйсен ыйтăвĕсемпе пынине пĕлтернĕ. Конкретлă хисеп илсе кăтартнине Д. Медведев партишĕн ыйтупа пынă е ыйтăвне çырса пĕлтернĕ кашни çын пĕлтерĕшлĕ пулнипе çыхăнтарнă. Ыйтусенчен ытларахăшĕ пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферипе çыхăннине, унсăр пуçне кашни регионта ыйтусем тĕлĕшпе хайне евĕрлĕх пуррине асăннă. Çавăнпа та кун пек ыйтусем сахалрах пулчăр тесен, кашни регион уйрăмĕнче шухăшламаллине палăртнă. Ыйтусене татса парассинче нумай функциллĕ центрсен япăх мар опычне шута илсе ăста юристсем ĕçлекен право хÿтĕлевĕн центрне йĕркелеме сĕннĕ.

**Тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекенсене пулăшасси**

Д. Медведев хăйĕн статйинче партие контрольлеме пулăшакан инструментсем çинчен те сăмах пуçарнă. Партире ăста, ĕçчен çынсемпе тимлĕ политиксем сахал маррине, анчах та ытларах чухне ыттисем пирки пĕлтернине каланă вăл. Парти ертÿçи ун пеккисем – хăйсене мăнна хураканисемпе тÿрккессем – парти уставĕнчи этика нормисене хирĕçленине пĕлтернĕ. Д. Медведев партин шалти контролĕ пуррине, апла пулин те «тулашри контролер» пуррине те шута илме сĕннĕ.

«Тулашри контролер» тесе вăл массăллă информаци хатĕрĕсене каланă: паян вĕсем професиллĕ журналистсем кăна мар, блогерсем те, социаллă медиасетьсенче информаци саракан гражданла активлăхпа палăрса тăракансем те. Парти ертÿçи, вĕсем çивĕч ыйтусем çĕкленине палăртса, пуринпе те хутшăнма тата ĕçлеме вĕренмеллине палăртнă.

Хăйĕн статйинче парти председателĕ тĕп канашăн членĕсен пысăк пĕлтерĕшлĕ задачăсене, вăл шутра партин социаллă проекчĕсене пурнăçлассипе уйрăм ответлăх пуррине аса илтернĕ.

Д. Медведев çакна партие улăштармалли темисем шухăш çеç, ку статья – калаçу пуçламăшĕ кăна, тесе палăртнă. Ăна малалла вырăнти организацисенче, парти конференцийĕнче тăсмаллине каланă. «Парти шухăшĕсемпе ĕçĕсене ырлакансемпе тата пĕрле ĕçлеме кăмăл тăвакансемпе калаçу йĕркелемелле. Вĕсем мĕн шухăшлани пирĕншĕн пĕлтерĕшлĕ, вĕсен пулăшăвĕ те кирлĕ», – тесе çырнă вăл.

**Пичете Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

**Çамрăксен ыйтăвĕсемпе**

# Тĕллевĕсем çар ĕçĕпе çыхăннă



**Çар вĕренÿ учрежденийĕсене вĕренме кĕрес текенсем иртнĕ эрнекун Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатне пухăнчĕç.**

Владимир Казаков çар комиссарĕ каланă тăрăх, кăçал çар вĕренÿ учрежденийĕсене Муркаш районĕнчи 17 çамрăк вĕренме кĕрес тĕллевлĕ.

– Çар вĕренÿ учрежденийĕсене вĕренме кĕрес текенсемпе эпир çулсеренех тĕл пулу йĕркелетпĕр. Вĕсемпе ятарлă инструктаж ирттеретпĕр, вĕсен ыйтăвĕсене хуравлатпăр. Абитуриентсене хушма тĕрĕслевсене хутшăнма вĕренÿ организацийĕсене мĕнле çитсе килмеллине, унта хăйсене мĕнле тытмаллине ăнлантаратпăр, – палăртрĕ çар комиссарĕ.

Çакăн пек тĕл пулусем абитуриентсене вĕренÿ организацийĕсенче пулма пултаракан кĕтмен самантсенчен асăрхаттарассипе те çыхăннă. Калаçура çар комиссарĕ çамрăксене тĕрлĕ тĕслĕхпе паллаштарма тăрăшать, вăл шутра – çамрăксен çăмăлттайлăхне пула тунă пĕчĕк йăнăш вĕренме кĕме чарнин тĕслĕхĕсемпе те.

Тĕл пулусене çар вĕренÿ учрежденийĕнчен вĕренсе тухнă е хальхи вăхăтра вĕренекен курсантсене те чĕнеççĕ. Иртнĕ тĕл пулăва килнĕ Турай ял тăрăхĕнчи Кремль курсанчĕ Андрей Иванов хăйĕн пурнăçĕпе, вĕренĕвĕпе тĕплĕнрех паллаштарма кăмăл турĕ. Ентеш çамрăксене хăйсен тĕллевне пурнăçлама тата ытларах хавхалантарма пулăшрĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Пенси фончĕ хыпарлать**

# Тÿлевсене çĕнĕрен шутласа панă

**Инвалид ачана е ачаран 1 ушкăн инвалид çынна пăхакансене уйăхсерен парса тăракан тÿлев июль уйăхĕнчен пысăкланĕ. Вăл халĕ 10 пин тенкĕпе танлашать.**

Муркаш районĕнче тÿлев пурĕ 99 çыннăн, ĕçлемен ашшĕ-амăшĕн тата опекунăн, пысăкланчĕ. Чăваш Енре вара çак ырă улшăну пурĕ 3,3 пин çынна пырса тивĕ.

Аса илтеретпĕр, РФ Президенчĕн Указĕ вăя кĕриччен çак тÿлев 5,5 пин тенкĕпе танлашнăччĕ.

Инвалид ачана е ачаран 1 ушкăн инвалидне пăхса пурăнаканĕ ачан çывăх мар тăванĕ пулсан (ашшĕ-амăшĕ мар тата опекун мар), çак тÿлев малтанхиех юлать – 1200 тенкĕ. Çакă инвалид ачана унăн çывăх тăванĕсем пăхасси çине те витĕм кÿмелле.

Муркаш районĕнче, маларах асăнтăмăр, 99 çыннăн – 94 ашшĕ-амăшĕн (усрава илнĕ çыннăн) тата 4 опекунăн – тÿлевĕ пысăкланчĕ. Вĕсене ăна хăйсем заявлени çырмасăрах çĕнĕрен шутласа панă.

Инвалид ачана а ачаран 1 ушкăн инвалидне пăхса пурăнма тытăннăран тÿлев илсе тăрасси пирки РФ Пенси фондне 2019 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ хыççăн пĕрремĕш хут заявленипе тухакансем те тÿлеве тÿрех çирĕплетнĕ çĕнĕ калăпăшпа илсе тăма тытăнаççĕ. Заявление РФ Пенси фончĕн вырăнти клиент службинче е Пенси фончĕн сайтĕнчи «Личный кабинетра» çырма пулать.

**РФ ПФ Муркаш районĕнчи клиент служби.**

Ял уявĕ

# Кашмашсем пĕрремĕш хут ял уявне паллă турĕç



**Юлашки çулсенче районти ялсенче иртнине тивĕçлипе хакласси, мĕн пурнăçланине халăхпа пĕтĕмлетесси вăй илме пуçларĕ. Çапла вара малашлăха пăхакан ял çыннисем пурнăç ыйтнипе хăйсен ял уявĕсене савăнăçлă ирттерме тытăнни ялсенчи пурнăç та вĕресе тăнине çирĕплетет. Аслă ăрурисем те, çамрăксем те, ача-пăча та тăван ял пурнăçĕнчен катара тăмаççĕ, айккинче юлмаççĕ. Çакă ял çыннисем пĕр çемьери пек пурăнни пирки калать. Çакна çирĕплетекен çĕнĕ тĕслĕх. Кăçал «Кашмаши: история деревни в документах и лицах» кĕнеке кун çути курчĕ. Унăн авторĕ – Вячеслав Мартынов. Ăна çырнă чух ялпа çыхăннă нумай çĕнĕлĕхе пĕлнине те пытармарĕ вăл уяв сăмахĕнче.**

Иртнĕ шăматкун, çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнче, кашмашсем ял йĕркеленнĕренпе темиçе ĕмĕр иртнĕ хыççăн ял уявне йĕркелесе ячĕç. Çак ятпа ял варринче Культура çурчĕ умĕнче кунĕпех халăх йышлă пулчĕ. Пĕрисем юрларĕç, теприсем выляреç, виççĕмĕшсем çĕнтерӳçĕсене чысларĕç.

Кашмаш ялĕ – районта пысăккисенчен пĕри. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, ял историйĕ пуян. Унăн тымарĕсене – çĕршер çул. Асăннă ял Хуракасси шутĕнче пулнă. Кашмашсене кунта вырнаçма малтанах çăмăл пулман. Иртнĕ ĕмĕрсенче кунти çĕрсем Аслă Оринин халăхĕн аллинче пулнă. Хуракасси çыннисем йышланса пынă май, юнашарах лайăх çĕр пуррине шута илсе, унта вырнаçасшăн пулнă. Орининсем те çав çĕре ахаль парасшăн пулманран, асăннă çĕрсемшĕн темиçе çĕр çул хушши хирĕçтăру сике-сике тухнă. Тавлашуллă çĕрĕн лаптăкĕ пин те çĕр теçеттин шутланнă. Унăн хуçи Хусан ханствин наместникĕ Кутайберда ятлă тутар пулнă. Вырăнти халăхпа питĕ туслах пурăнманскер, 1437 çулта вăл хăйĕн çĕрне хуракассисене сутса тухса кайнă. Анчах çĕршĕн тупăшасси ку тăрăхра иртсе кайман.

Аслăрах çынсем каланипе хуракассисем тавлашуллă çĕр чиккинче ял никĕслеме шутлаççĕ. Вăл хăвăрт ӳсме пуçлать. 1719 çулхи 46 киллĕ ялтан 1859 çул тĕлне 120 кил хуçалăхлă ял пулса тăнă. Вăл тĕрлĕ çулта Хоракассы, Мăн Хоракассы ятлă пулнă. Шурча чиркĕвĕн священникĕ 1859 çулта Хусан кĕпĕрнийĕн Чикме уезчĕн картти çинче çак ял вырăнне Кашмаш тесе çырнинчен ялăн çĕнĕ пурнăçĕ пуçланать. Çак вăхăтра ялта 250 арçынпа 246 хĕрарăм пурăннă. 1906 çулта ялти кил хуçалăх шучĕ 157-не çитнĕ, ялта пĕтĕмпе 790 çын пурăннă. Тепĕр 20 çултан кил хуçалăх хисепĕ 180-па танлашнă, вĕсенче пурăнакансем 896 çын пулса тăнă. Ял паян та – малашлăха пăхса аталанакан вырăнсенчен пĕри. Çакна хăйсен сăмахĕнче уява уçакансемпе ертсе пыракансем уçăмлă палăртрĕç.

Ял историйĕпе пухăннисене ялти вĕрентекен Николай Ершов паллаштарчĕ. «Пирĕн аслă асаттесемпе асаннесем çак çĕре ял харпăрлăхĕ тăвассишĕн тар, юн юхтарнине пирĕн манмалли çук», – терĕ вăл. Уява ертсе пыракансем ялшăн савăнăçлă самант пулнипе усă курса ялти хастарсене тата тăван ен аталанăвне ытлă-çитлĕ тӳпе хывакансене ятран чысларĕç. Уявра çавăн пекех килти хушма хуçалăха ăнăçлă аталантаракансем, чечек лартассипе маттурсем, çамрăк çемье çавăракансем, тăван хуçалăхра ĕçлесе ырă ята тивĕçнисем Тав çырăвĕсемпе парнесене тивĕçрĕç.

Ташă-юрăпа пуян уявра тĕрлĕ апатçимĕçпе сăйласси те иккĕмĕш вырăна юлмарĕ. Уява пынисем шашлык активме те, какай е пулă шӳрпи çиме те пултарчĕç.

– Пирĕн ялта кунашкал уяв пулать тесе шутламан. Тăрăшсан, вăй хурсан, туманнине те пурнăçа кĕртме пулнине хам курса ĕнентĕм, – терĕ савăнакан халăх патĕнчен иртнĕ май «Хисеп Палли» (1971 çул) тата Октябрь Революцийĕн (1973 çул) орденĕсен кавалерĕ, ĕмĕр тăршшĕпех тăван хуçалăхра бригадирта ĕçленĕ Леонид Алжиров **(сăн ӳкерчĕкре сулахайри).**

Ял пуласлăхĕ унта пурăнакансен аллинче пулнине Кашмашри ял уявĕнче пулса курсан тепĕр хут ĕнентĕм.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Çерем çĕрсене уçнăранпа – 65 çул

# Çĕршыв чĕннипе...

Кăçал Раççейре уçман çеремсене пусă çаврăнăшне кĕртме пуçланăранпа 65 çул çитрĕ. Паянхи яш-кĕрĕмшĕн вăл – кĕнекери истори çеç. Эпир вара çĕршыв çав вăхăтра хамăра ĕç фронтне чĕнсен, пĕр-пĕрин çине пăхса «Каятпăр-и?» тесе ыйтнă та «Каятпăр!» тесе хуравласа васкаварлăн çула пуçтарăннă...

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Çĕнтерӳ тунă хыççăн мирлĕ пурнăçра çăкăр çителĕклĕ пулманни сисĕннĕ. Çав вăхăтра Çĕпĕрпе Урал тăрăхĕнче тата Казахстанра миллионшар гектар çерем çĕрсем усăсăр выртнă. Вĕсене пусă çаврăнăшне кĕртсе тухăçлă тырă-пулă туса илесси вăл вăхăтра çĕршыв умĕнчи тĕп тĕллев шутланнă. Çак лару-тăрăва тĕрĕс хак парса çĕршыв ертӳçисем 1954 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче «Усăсăр выртакан çерем çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртесси çинчен» йышăну тунă. Çĕршывăн çак чĕнĕвне пурнăçлама вăл вăхăтри пиншер çамрăк çерем çĕрсене сухаласа вăхăтра акса хăварма тата ӳстернĕ тырă-пулăна çухатусăр пуçтарса кĕртме хутшăннă. «Çерем çĕрсем, целина», – çак сăмахсенчен хакли çукчĕ ун чухне. Унта хутшăнасси кашниншĕнех ĕç паттăрлăхĕччĕ.

Йышăнăва пурнăçласа 1954 – 1960 çулсенче усăсăр выртакан тата уçман çеремсене пĕтĕмпе 42 миллион гектар ытла пусă çаврăнăшне кĕртнĕ. Çав шутран Раççейре – 16,3 миллион гектар. Сĕнтĕр районĕнчи çамрăксем те **(сăн ӳкерчĕкре)** çĕршыв чĕнĕвĕнчен тăрса юлмарĕç. Ыттисемпе пĕрле манăн та çерем çĕрсем çинче туса илнĕ тырă-пулăна пухса тирпейленĕ çĕрте ĕçлеме тӳр килчĕ. Унтанпа нумай çул иртрĕ, анчах Çурçĕр Казахстанра ытти çамрăкпа туслă ĕçленĕ кунсем асрах.

1958 çулхи çĕртме уйăхĕнче Чăваш Республикинчен 20 вакунлă пуйăс Казахстан еннелле çул тытрĕ. Лайăх астăватăп, кашни район валли пĕр вакун уйăрса панăччĕ. Пур вакунран та çамрăксем хаваслăн калаçни, вĕсен юрри-кĕвви, хуткупăс сасси янăраса тăратчĕ. Пирĕншĕн, пуйăс çине пĕрремĕш хут ларнă 17 – 18 çулсенчи çамрăксемшĕн,



хăвăрт хыçа юлса пыракан илемлĕ тавралăха сăнаса пырасси пысăк савăнăçчĕ.

Икĕ талăкран пирĕн пуйăс Çурçĕр Казахстанти Мамлютка станцине çитсе чарăнчĕ. Пире кĕтсе илнĕ музыка сасси ĕçлеме пынă çамрăксен чунне çĕклентерчĕ. Пурте хаваслă, тăрăшуллă ĕçлес ĕмĕтлĕччĕ. Кĕçех вакунсенчи ушкăнсене ĕç вырăнĕсене пайларĕç. Пирĕн асăннă станцирен пĕр çухрăмра вырнаçнă элеватора ĕçлемелле пулать иккен. Сĕнтĕр районĕнчен вырмана килнĕ 37 çамрăка Мăн Сĕнтĕрти пир-авăр фабрикинче бригадирта ĕçленĕ Ардальон Григорьевич Сапожников ертсе пычĕ.

Элеватор директорĕ пире ăшшăн кĕтсе илчĕ, пирĕнтен маларах çитнĕ çармăс çамрăкĕсемпе паллаштарчĕ. Вăл вăхăтра элеватора тырă килме пуçламанччĕ-ха. Çавăнпа пире çар палаткисене вырнаçтарнă хыççăн яшсене элеватора пыракан чугун çула юсанă çĕрте ĕçлеме çирĕплетрĕç. Хĕрсене вара тырă йышăнмалли складсене тасатса тирпейлеме хушрĕç. Шутлă вăхăтра хамăр ума лартнă пĕрремĕш тĕллеве пурнăçларăмăр.

Утă уйăхĕн пуçламăшĕнче элеватора тырă килме пуçларĕ. Çав вăхăтран пирĕн те ĕç калăпăшĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Эпир çĕрне-кунне пĕлмесĕр тенĕ пек ĕçлеттĕмĕр. Канупа ĕçе çирĕп йĕркелесе пыраттăмăр. Çапла майпа кашни эрнерех çĕршыв пӳлмине 7 – 8 вакун типĕтнĕ тырă тиесе ăсататтăмăр.

Чӳк уйăхĕ тĕлне хамăра хушнă вырма ĕçĕсене чыслă пурнăçларăмăр. Элеватор директорĕ тырă-пулă тирпейлеме вăхăтра пулăшнăшăн тав туса пире 20-шер пăт тырă илме хут çырса пачĕ. Тыррине Шупашкарти элеватортан илтĕмĕр.

Паян вара эпĕ çерем çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртме манпа пĕрле хутшăннă Панклири Иван Тихонович Тихонова, Чуманкассинчи Александр Кондратьевич Кондратьева тата ытти юлташа йывăрлăхсене пĕрле чăтса ирттернишĕн чĕререн тав тăватăп. Сывлăхăр сирĕн çирĕп, кун-çулăр вăрăм пултăр.

**Г. ОСИПОВ,**
**ĕç ветеранĕ.**

Пушар хăрушсăрлăхĕ

# Тимлĕ пулăр

**Шăрăх çу кунĕсем тăни пушар хăрушсăрлăхне пăханассине çӳллĕ шая çĕклерĕ. Ăна кулленхи йĕркене кĕртни уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Ахальлĕн...**

Районта утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 36 пушар регистрациленĕ. Ку вăл иртнĕ çулхинчен 12 тĕслĕх нумайрах. Тĕрлĕ сăлтава пула ирĕке кайнă çулăм тыткăнĕнче çын пурнăçĕ таталнă тĕслĕх пулманччĕ пулсан, çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнче çак йĕрке пăсăлчĕ.

Асăннă кун 13 сехет те 44 минутра пушар хуралне Ильинка ял тăрăхĕнчи Чĕпĕлкассинчи пурăнмалли çуртра пушар тухни пирки хыпар çитрĕ. Инкекпе кĕрешме хамăр патăмăрти караулпа пĕрлех Мăн Сĕнтĕрти тата Шомикри уйрăм постсенчи çăлавçăсене чĕнтĕмĕр.

Эпир çитнĕ çĕре çулăм пӳрт çивитти çине тухаччĕ. Тивĕçлĕ йышăнусем туса ăна сарăлма памарăмăр. Çав вăхăтрах çăлавçăсен ушкăнĕ чӳречерен кĕрсе пӳртрен 43 тата 51 çулсенчи хĕрарăмпа арçынна кăларчĕ. Лару-тăрăва тивĕçлĕ хак парсан, пулăшу кая юлни палăрчĕ. Пушар сăлтавне тĕпчеççĕ.

**Ю. ВАРЮХИН,**
**37-мĕш номерлĕ пушар**
**чаçĕн пуçлăхĕ.**

Сывлăх сыхлавĕ

# Пирус сиенĕ пирки

**Паянхи куна пирус сиенĕ пирки пĕлмен çын çук та пулĕ. Кунпа пĕрлех нумай çĕршывра пируса хирĕçлесе саккунсем те йышăнаççĕ. Çаксен ырă енĕсем пурри куçкĕрет, анчах та сиенлĕ йăла пирки ыйтăва тĕпрен татса панă тесе калама çукха. Нумайăшĕ çав-çавах пирус мăкăрлантарать, унпа хăйсен организмне тата юнашар çыннсене сиенлет. Ку сиенлĕ йăлана пĕтерме пирус туртакансемпе кĕрешни, вĕсене сыватни çеç çителĕксĕр. Вăл малалла ан кайтăр, ăна çамрăксем ан хăнăхчăр тесе халăх хушшинче профилактикăна вăйлатмалла.**

Раççейре пирус туртакансене тĕпчени çакна кăтартса панă: арçынсен 62 проценчĕ ытла, хĕрарăмсен 28 процентне яхăн тăтăш пирус туртаççĕ. Туртакан çынсен пĕтĕмĕшле хисепĕ 44 миллионран иртет. Ку вăл пĕтĕмĕшле халăхăн 40 проценчĕ ытла. Çĕршывра пурăнакансен 1 проценчĕ 15 çулччен çак сиенлĕ йăлапа туслашать. Çак тĕрĕслеврех пирус туртас интенсивлăхпа та кăсăкланнă. Çапла вара арçынсем вăтамран талăкне 18 сигарет туртаççĕ пулсан, хĕрарăмсен кăтартăвĕ 13 – 15 штукпа танлашать.

Раççейре пурăнакансен 80 проценчĕ – пирус туртакан сăтăрĕн тыткăнĕнче: барсенче, обществолла вырăнсенче, хăйсен килĕнче. Арçынсем вилнин 23 проценчĕ, хĕрарăмсем пурнăçран уйрăлнин 4 проценчĕ пирус туртнипе çыхăнни те паллă.

Çынсем мĕншĕн пирус туртма пуçлаççĕ? Нумай чухне çакă ачалăхран пуçланать. Ашшĕ-амăшĕ пирус туртни, аслă юлташĕсем е пиччĕшĕсем сиенлĕ йăлапа туслă пулни ачана та вĕсем пек пулма «хавхалантарать».

Чылай чухне ача-пăча сигарета вылямалла алла илни те пурăна киле пирус туртас хăнăхăва çаврăнни паллă. Çамрăксем хушшинче «мода хыççăн хăвалани те» пируспа туслаштарать. Çакă уйрăмах хĕрсемшĕн паллă пулса тăрать.

Пирус сиенĕнчен хăтăлассине кашнин хăйĕн татса памалла.

**В. МАТВЕЕВ,**
**санитарипе гигиена врачне**
**пулăшаканĕ.**




## Ыйту – хурав

# "Ĕç ветеранĕ" ята камсем тивĕçеççĕ?

*(Тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ илме кăмăл тунисене Чăваш Республикин Юстици министерствинчен хуравлаççĕ)*

**Ыйту: – «Ветеран труда» тата «Ветеран труда Чувашской Республики» ят илме камăн право пур?**

**Хурав:** – **«Ветеран труда»** ят кам илме пултарнине федерацин 1995 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче йышăннă 5-ФЗ номерлĕ «О ветеранах» Саккунĕпе çирĕплетнĕ.

Кусем вĕсем «Ветеран труда» удостоверени пуррисем, СССР тата Раççей Федерацийĕн орденĕсемпе медалĕсене тивĕçнисем, СССР тата Раççей Федерацийĕн хисеплĕ ячĕсене илнисем, Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Хисеп грамотисене тата Тав çырăвĕсене тивĕçнисем, ĕçри çитĕнӳшĕн ведомство паллисене тивĕçнисем (пенсие тухма шута илекен ĕç стажĕ арçынсен 25 çул тата хĕрарăмсен 20 çул пулмалла), Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче çул çитмен чухне ĕçлеме тытăннисем (арçынсем 40 çул тата хĕрарăмсем 35 çул стаж пухнисем).

«Ветеран труда Чувашской Республики» ят памалли условисене Чăваш Республикин 2015 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче йышăннă 90-мĕш номерлĕ «О ветеранах труда Чувашской Республики» Саккунĕнче палăртнă.

Кусем вĕсем Чăваш Республикин патшалăх наградисене тивĕçнисем, çавăн пекех хĕрарăмсем 37,5 çул, арçынсем 42,5 çул ĕç стажĕ пухнисем (вăл шутран 50 процентĕнчен кая мар Чăваш Республикинче ĕçлесе тунă стаж пулмалла), яланах Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакансем.

Ĕç стажĕ шутне ĕçленĕ пĕтĕмĕшле тапхăр кĕрет. Ĕç стажне ĕç кĕнекинче, колхозникăн ĕç кĕнекинче, çар билетĕнче çырса пынисемпе, ĕç паракансем тата патшалăх (муниципалитет) органĕсем паракан справкăсемпе, архив учрежденийĕсен справкисемпе, ĕç килĕшĕвĕсемпе, пенси шутласа панă органсен справкисемпе çирĕплетес пулать.

**«Ветеран труда Чувашской Республики»** ята çынна пенсие тухсан е хĕрарăмсене 55 çул, арçынсене 60 çул тултарсан пама пултараççĕ. Ят илме вĕсен заявлени çырмалла пулать. Ĕç йĕркине пăснăшăн ĕçрен хăтарнисене «Ветеран труда Чувашской Республики» ят памаççĕ. Ку ята парассин йĕркине Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2005 çулхи сентябрĕн 16-мĕшĕнчи 226-мĕш тата 2007 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнчи 127-мĕш номерлĕ йышăнăвĕсенче палăртнă.

Ят илме заявленипе социаллă хӳтлĕх пайне пымалла. Пĕрле ят илме тивĕç пулнине ĕнентерекен документсене е вĕсен копийĕсене, паспортпа пенси удостоверенийĕн копине тата 3х4 см сăн ӳкерчĕк илсе пымалла.

**Ыйту: – Ĕç ветеранĕсем тĕлĕшпе социаллă пулăшăвăн мĕнле мелĕсене пăхса хунă?**

**Хурав:** – Ĕç ветеранĕсене тата Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсене тивĕçтермелли социаллă пулăшу мелĕсене Чăваш Республикин «О социальной поддержке тружеников тыла военных лет и ветеранов труда» тата «О ветеранах труда Чувашской Республики» Саккунĕсемпе çирĕплетнĕ.

Вĕçĕмех тата ытларах тапхăрне Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан ветерансене – хĕрарăмсем 55 çула тата арçынсем 60 çула çитнĕ, ниçта та ĕçлемеççĕ пулсан, уйăхсерен укçа тӳлевĕ парса тăраççĕ. Вăл 1100 тенкĕпе танлашать. Кунсăр пуçне ветеран ĕçленине е ĕçлеменнине пăхмасăрах вырăнти телефон çыхăнăвĕн линийĕпе усă курнăшăн абонент тӳлевне 50 процент чакараççĕ.


**КРОВЛЯ**
**ЛЮБОЙ СЛОЖНОСТИ**
**Работаем быстро, качественно, дешево. Поможем подобрать и доставить стройматериалы по низким ценам.**
**Цены ниже, чем на рынке.**
**КЛАДКА, ФУНДАМЕНТНЫЕ работы.**
**Тел.: 8-905-342-00-70.** 5-10.

**ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и другое. ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ. НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44.** 9-10.

**Частная охранная организация примет на работу охранников для работы в Подмосковье. ЦКАД. Работа по 12 часов в сутки, вахта, зарплата 36 тыс. руб. Комфортные условия проживания. Тел. 8-937-950-12-63.** 1-2.

**Кивелнĕ ЭЛЕКТРОПРОВОДКА – пушар хăрушлăхĕ! Кил-çуртри электропроводкăна, счетчика улăштаратпăр.**
**Тел. 8-937-015-35-40.** 1-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**любой сложности.**
**Подарки. Скидки.** 8-10.
**Гарантия 10 лет.**
**Тел. 22-95-11, 8-917-078-95-11.**

**Продаю мотор-редуктор, двигатель для автомашины «Жигули», гидроцилиндры, гидромоторы, гидрораспределитель – все новое, недорого. Тел. 8-967-794-08-42.** 3-5.

* * *

**Продаются бычки от 1 до 3 месяцев. Тел. 8-905-029-67-90.**

* * *

**Продаю дом с надворными постройками в д. Хорной, ул. Чиганары, 36, земля 41 сот. тел 8-953-011-42-41.**


## РАБОТА / ĔÇ


**Требуется оператор АЗС в с. Моргауши. Тел. 8-903-389-19-37.**


## Объявления


**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно.** Цена договорная. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 14-20.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел. 8-927-667-40-92.** 45-47.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 6-10.

**Песок, щебень, гравмасса, бой кирпича, асфальтная крошка.** Доставка. Тел. 8-927-857-21-33, 8-937-393-37-07. 21-62.

* * *

Продаю: **песок, бой кирпича, гравмассу, щебень, торф.** Доставка. 8-996-949-09-54. 15-20.

* * *

**Продаю: Песок. Гравмассу. Навоз. Чернозем. Грунт. Гравий. Щебень. Бой кирпича.** Доставка до 15 тонн. Недорого.Тел. 8-905-198-63-88. 2-11.

* * *

Продаю **чернозем, торф, асфальтную крошку, щебень, гравмассу, песок, бой кирпича и бетона**, вывоз строительного мусора. Тел. 8-917-676-93-79, 8-961-347-25-47. 7-10.

* * *

**ПЕСОК РЕЧНОЙ, КАРЬЕРНЫЙ, ГРАВМАССА, БОЙ КИРПИЧА, ЩЕБЕНЬ, ГРУНТ** и т.д. Доставка по Моргаушскому району. НЕДОРОГО. Тел. 8-905-345-96-62. 6-10.

* * *

**ПРОДАЮ: ГРАВМАССУ, ПЕСОК, БОЙ КИРПИЧА, ЩЕБЕНЬ, ТОРФ.** Доставка. Тел. 8-905-028-22-25. 4-10.

* * *

**Песок, гравмасса (ОПГС), щебень (известковый, гранитный).** Недорого. Доставка. Тел. 8-987-667-42-51. 2-10.

* * *

**Пластиковые окна** от производителя. Низкие цены. Короткие сроки. Тел. 8(8352)361540 8-967-470-15-40. 8-10.

* * *

**ЗАБОРЫ** ИЗ СЕТКИ-РАБИЦЫ, СВАРНОЙ СЕТКИ, ПРОФНАСТИЛА, ЕВРОШТАКЕТНИКА. ВОРОТА, КАЛИТКИ, НАВЕСЫ, КОЗЫРЬКИ. БЛАГОУСТРОЙСТВО ЗАБРОШЕННЫХ УЧАСТКОВ. ПЕНСИОНЕРАМ – СКИДКИ.Тел. 8-937-942-87-85. 9-10.

* * *

**Все виды строительных работ.** Дома и бани под ключ, кровля любой сложности. Внутренняя и внешняя отделка, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Тел. 8-927-865-60-00, 8-987-670-56-78. 3-10.

* * *

**Фундамент, кирпичная кладка, кровля** любой сложности. Деревянные дома и бани, отделка домов сайдингом. Смета бесплатно. Тел. 8-927-992-32-42. 3-10.

* * *

**Строим все**. Дешево, быстро и с гарантией. Пенсионерам скидки 20%. Тел. 8-967-795-88-69. 2-5.

* * *

**Услуги мини-экскаватора**, ширина ковша: 30 см, 35 см, 45 см, 55 см. Глубина копания 3 метра. Час работы мини-экскаватора 1000 руб. плюс доставка. Прокладка труб под асфальт методом прокола до 10 м. Бурение скважин на воду, цена 1600 руб. за 1 метр. Работаем за наличный и безналичный расчет. Тел. 8-962-599-04-70, 8-927-847-85-59. 2-3.

* * *

**Бурение колодцев** пазовыми кольцами. Тел. 8-960-306-19-72. 1-5.

* * *

Открылся массажный кабинет в здании Сбербанка в с. Моргауши, 2 этаж, запись по телефону: 8-965-687-43-00.

* * *

Продам кирп. дом. с зем. участ. 40 сот. в выселок Первое Мая. Без внутр. отделки, электр. и вода в доме, газ. труба в 1 м. от дома, придворн. построек нет. Цена договорная. Тел. 8-967-473-87-26.


## КУПЛЮ / ТУЯНАТĂП


Куплю: КОРОВ, бычков, телок от 1 месяца, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Дорого. Тел. 8-961-345-77-89. 16-33.

* * *

Куплю КОРОВ на мясо; БЫЧКОВ от 10 дней до 500 кг; ТЕЛОК. Тел. 8-937-951-19-03. 16-33.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК, ЛОШАДЕЙ, ОВЕЦ. ДОРОГО. Старых, молодых в любом состоянии и вынужденный забой. Тел. 8-905-197-61-66. 1-10.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ, ТЕЛОК до 800 кг, ВЫНУЖДЕННЫЙ УБОЙ. Тел. 8-927-851-27-77. 6-10.

* * *

Куплю коров, бычков, телок, молочных телят, баранов. Тел. 8-905-341-69-25. 9-10.

* * *

КУПЛЮ БЫЧКОВ от месяца до 600 кг. КОРОВ. ТЕЛОК. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-937-952-33-80. 2-5.

* * *

КУПЛЮ КОРОВ, БЫЧКОВ от месяца на откорм. ДОРОГО. Тел. 8-937-391-23-33. 2-5.

* * *

Куплю телок, бычков, коров. Тел. 8-905-344-06-84. 2-3.


## Прогноз погоды

По данным сайта rp5.ru

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления погоды | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | +12 | +19 | +22 | +16 | +12 | +18 | +18 | +12 | +10 | +16 | +18 | +13 | +10 | +19 | +21 | +16 |
| Ощущается | | | | | | | | | +8 | | | | +8 | | | |
| Давление | 737 | 738 | 738 | 739 | 739 | 740 | 741 | 742 | 741 | 742 | 742 | 743 | 743 | 743 | 742 | 740 |
| Ветер | 4 | 6 | 7 | 4 | 4 | 8 | 8 | 3 | 3 | 5 | 5 | 3 | 3 | 5 | 5 | 4 |


Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви.
ЧР Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
Телефонсем: тĕп редактор – 62-1-36, бухгалтери – 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ – 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем – 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction_morgau@mail.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Р– реклама материалĕ.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: П2851.
Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ В.Л. Шапошников.
Пичете панă 2.07.2019 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 16 сех. 20 мин., чăннипе – 16 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4243.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Сĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.